27-мĕш çулĕ тухать. Хакĕ 20 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1945
МАРТ
23
ЭРНЕКУН
55(6806) №

Чăваш Коммуни

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

ВЕРХОВНЫЙ ГЛАВНОКОМАНДУЮЩИН ПРИКАЗĔ

Украинăри 1-мĕш фронт çарĕсен командующине
Совет Союзĕн Маршалне КОНЕВА
Фронт штабĕн начальникне
Арми генералне СОКОЛОВСКИЕ

УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронт çарĕсем, ОППЕЛЬН хулинчен хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра тăшман оборонине татса кĕнĕ те кашни енчех 40 километр таран малалла кайнă тата, НОЙШТАДТ хули районĕнче пĕрлешсе, ОППЕЛЬН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехри нимĕç çарĕсен группине хупăрласа илсе аркатса тăкнă.

Фронт çарĕсем çав çапăçусенче нимĕç салтакĕсемпе офицерĕсене 15.000 çынна çити тыткăна илнĕ, 464 тупă тата ытти хĕçпăшалсемпе çар пурлăхĕ нумай тытса илнĕ.

Наступлени тунă вăхăтра фронт çарĕсем Нимĕç Силезийĕнче НОЙШТАДТ, КОЗЕЛЬ, ШТЕЙНАУ, ЗЮЛЬЦ, КРАППИТЦ, ОБЕР-ГЛОГАУ, ФАЛЬКЕНБЕРГ хулисене туртса илнĕ, çавăн пекех тата халăх пурăнакан ытти 400 пункта ытла çапăçса тытса илнĕ.

Нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ тата малта асăннă хуласене туртса илнĕ чухнехи çапăçусенче çаксем чапа тухнă: ГУСЕВ генерал-полковникăн, КОРОВНИКОВ генерал-лейтенантăн, КУРОЧКИН генерал-полковникăн, ЖАДОВ генерал-полковникăн, БУХОВЕЦ генерал-лейтенантăн, КОВАЛЬЧУК генерал-майорăн, ГОНЧАРОВ генерал-майорăн, ЛЯМИН генерал-майорăн, НАУМОВ генерал-майорăн, ТРУБАЧЕВ генерал-майорăн, БОКЛАНОВ генерал-майорăн, КАЗАЧОК генерал-майорăн, ШАРАБУРКО генерал-майорăн, АНДРЕЕВ генерал-майорăн, ОЗИМИН генерал-майорăн, НОВОСЕЛЬСКИЙ генерал-лейтенантăн, ГОВОРОВ генерал-майорăн, ДОЛГОВ полковникăн, ЛЫСЕНКО полковникăн, ЯСТРЕБОВ генерал-майорăн, ЗИНОВЬЕВ полковникăн, СУХАРЕВ полковникăн, ПЫПЫРЕВ полковникăн, МУРАШОВ полковникăн, ГРИШИН генерал-майорăн, ЕФИМЕНКО полковникăн, РОМАШИН полковникăн, ЛАВРОВ полковникăн, НИКАНОРОВ полковникăн, ТИМОШЕНКО полковникăн, РОДИОНОВ генерал-майорăн, КУЗЬМИН полковникăн, АЛЕКСАНДРОВ генерал-майорăн, КУЧЕРЕНКО полковникăн, ШАПОВАЛОВ полковникăн, ПЕТРЕНКО полковникăн, РУСАКОВ генерал-майорăн, ЧИРКОВ генерал-майорăн çарĕсем; танковăй çарсен генерал-полковникĕн НОВИКОВĂН, ЛЕЛЮШЕНКО генерал-полковникăн, танковăй çарсен генерал-майорĕн СТОГНИЙĔН, танковăй çарсен генерал-майорĕн УПМАНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн БЕЛОВĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн КОРЧАГИНĂН, танковăй çарсен генерал-лейтенанчĕн ПОЛУБОЯРОВĂН, танковăй çарсен генерал-майорĕн КУЗНЕЦОВĂН, ОРЛОВ полковникăн, ВОЛКОВ полковникăн, ШЕВЧЕНКО полковникăн, ЗАЙЦЕВ подполковникăн, ДЕНИСОВ полковникăн, ЕФИМОВ полковникăн, МАХНО подполковникăн, ЧУРИЛОВ подполковникăн, МОРЯХИН полковникăн, ДЕЖУРОВ полковникăн, ДУДКО полковникăн, ГРИШЕНКО полковникăн, СИЛОВ полковникăн, ЧЕРНЫХ подполковникăн, САЕНКО подполковникăн, БАРИЛОВ подполковникăн, МЕЛЬНИКОВ подполковникăн, ЧЕСНОКОВ полковникăн, ГУМЕНЧУК подполковникăн, ЛЕЛИКОВ майорăн танкисчĕсем; артиллери генерал-полковникĕн ВАРЕНЦОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн ЯРОВОЙĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛОСУХИНĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн МИХАЛКИНĂН, артиллери генерал-майорĕн ДОРОФЕЕВĂН, артиллери генерал-майорĕн МЕНТЮКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн КАБАТЧИКОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ПОЛУЭКТОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОРОЛЬКОВĂН, артиллери генерал-лейтенанчĕн КОЖУХОВĂН, артиллери генерал-майорĕн ВОЛКЕНШТЕЙНĂН, артиллери генерал-майорĕн КОФАНОВĂН, артиллери генерал-майорĕн САНЬКОН, артиллери генерал-майорĕн КРАСНОКУТСКИЙĔН, ФРАНЧЕНКО полковникăн, БЕЛОВ полковникăн, ШИЛОВ подполковникăн, артиллери генерал-майорĕн СОНИНĂН, СЫЧУГОВ полковникăн, КУЗНЕЦОВ полковникăн, ЧЕВОЛ полковникăн, МИШНИН полковникăн, КОХАНЕНКО полковникăн, КУЛИКОВ полковникăн, РЕУТОВ полковникăн, ТОЛМАЧЕВ полковникăн, ВОРОБЬЕВ полковникăн, НИКОНОВ полковникăн, КУЗЬМЕНКО подполковникăн, КОЛЕНЧЕНКО подполковникăн артиллерисчĕсем; авиаци генерал-полковникĕн КРАСОВСКИЙĔН, авиаци генерал-майорĕн ПРОНИНĂН, авиаци генерал-лейтенанчĕн РЯЗАНОВĂН, авиаци генерал-майорĕн УТИНĂН, авиаци генерал-майорĕн ГОРЛАЧЕНКĂН, авиаци генерал-майорĕн БАРАНЧУКĂН, авиаци генерал-майорĕн ДЕМИДОВĂН, НИКИШИН полковникăн, ЛОБЫШ полковникăн, ГРИБАКИН полковникăн, ШУНДРИКОВ полковникăн, ДОНЧЕНКО подполковникăн, КОЛОМЕЙЦЕВ полковникăн, МАЧИН полковникăн, ДАВИДКОВ полковникăн, НОГ полковникăн, ГОРЕГЛЯД подполковникăн, КРЮКОВ подполковникăн, КОЖЕМЯКИН полковникăн, ЧУМАЧЕНКО полковникăн, ВАШУРИН майорăн летчикĕсем; инженери çарĕсен генерал-лейтенанчĕн ГАЛИЦКИЙĔН, инженери çарĕсен генерал-майорĕн КОНЦЕВОЙĂН, ГРОМЦЕВ полковникăн, БУЛАХОВ полковникăн, ПОЛУЭКТОВ полковникăн, КОРДЮКОВ полковникăн, КОСТЕНКО полковникăн, БЕРЕЗИН полковникăн, БОНДАРЕВ подполковникăн саперĕсем; çыхăну çарĕсен генерал-лейтенанчĕн БУЛЫЧЕВĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн ЯКОВЛЕВĂН, çыхăну çарĕсен генерал-майорĕн НЕСТЕРОВĂН, ШЕЛАМЫТОВ полковникăн, ОСТРЕНКО полковникăн, государство хăрушсăрлăх подполковникĕн ГРИБАН связисчĕсем чапа тухнă.

Тунă çĕнтерĕве ялан лăха палăртса хăварас тесе, ОППЕЛЬН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ тата тăшман çарĕсене аркатса тăкнă чухнехи çапăçусенче уйрăмах чапа тухнă соединенисемпе чаçсене орденсемпе наградăлама тăратас.

Паян, мартăн 22-мĕшĕнче, 21 сехетре пирĕн Тăван çĕршыв столици МУСКАВ, икçĕр çирĕм тăватă тупăпа çирĕм хут пĕр харăс персе, УКРАИНĂРИ 1-мĕш фронтăн паттăр çарĕсене, ОППЕЛЬН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен оборонине татса кĕнĕскерсене тата тăшман çарĕсене аркатса тăкнăскерсене, Тăван çĕршыв ячĕпе салют парать.

Эсир ертсе пыракан çарсене, ОППЕЛЬН хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре нимĕçсен оборонине татса кĕнĕ тата тăшман çарĕсене аркатса тăкнă чухнехи çапăçусенче пулнăскерсене, питĕ чаплă çапăçнăшăн ТАВ ТĂВАТĂП.

Хамăр Тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн çапăçса вилнĕ геройсене ĕмĕр-ĕмĕр мухтав!

Нимĕç захватчикĕсене—вилĕм!

Верховный Главнокомандующи
Совет Союзĕн Маршалĕ И. СТАЛИН.

1945 çулхи мартăн 22-мĕшĕ. № 305.

МУСКАВ, КРЕМЛЬ

Совет Союзĕн Маршалне Сталин юлташа

Пирĕн мухтавлă Хĕрлĕ Çар гитлерла захватчиксене хирĕç пыракан вăрçăра тунă чаплă çĕнтерӳсемпе хавхаланса, эпир, Чăваш республикинчи Первомайски районри всевобуч боецĕсемпе шкулсенче вĕренекенсем, хамăр тытакан облигацисене тата перекетлесе хăварнă укçана 206.121 тенкĕ пухса, Тăван çĕршывăн оборонине çирĕплетмелли фонда хывrăмăр. Пирĕн çак пĕчĕк пулăшăва фашистла бандăсене çĕнтерлĕ çĕре йышăнма ыйтатпăр.

Укçа пухас ĕç малалла пырать.

Первомайски районăн Çарĕç Комиссарĕ майор БЫШИКОВ.
ВЛКСМ райкомĕн секретарĕ НИКОЛАЕВА.

ЧĂВАШ АССР-ĕ

Первомайски районăн Çарĕç Комиссарне майор БЫШИКОВ юлташа
ВЛКСМ райкомĕн секретарьне НИКОЛАЕВА юлташа

Первомайски районри всевобуч боецĕсемпе шкулсенче вĕренекенсене, ССР Союзĕн Оборона фондне укçапа государство заемĕсен облигацийĕсене 206.121 тенкĕ пухса панăскерсене, манран хĕрӳллĕ салам калама тата Хĕрлĕ Çар тав тунине пĕлтерме ыйтатăп.

И. СТАЛИН.

Информациллĕ пĕлтерӳ

1945 çулхи мартăн 21—22-мĕшĕсенче ВКП(б) Чăваш Обкомĕн XXI-мĕш пленумĕ пулса иртрĕ. Пленум çак ыйтусене сӳтсе-явре:

1. 1945 çулхи çуракине хатĕрленсе ирттересси çинчен.

(Докладчикĕ—ВКП(б) Обкомĕн пĕрремĕш секретарĕ ЧАРЫКОВ юлташ).

2. Облаçри парторганизацисене партиллĕ-организациллĕ ĕç мĕнле пулса пыни тата ăна лайăхлатмалли мерăсем çинчен.

(Докладчикĕ—ВКП(б) Обкомĕн иккĕмĕш секретарĕ АХАЗОВ юлташ).

3. Организациллĕ ыйтусем.

Пур ыйтусем тăрăх та пленум тивĕçлĕ решенисем йышăнчĕ.

Пленум ВКП(б) Обкомĕн пропаганда енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма А. С. ВИШНЯКОВ юлташа çирĕплетрĕ тата ăна ВКП(б) Обкомĕн бюро членĕсен составне кĕртрĕ; И. К. Иванов юлташа çав ĕçрен хăтарчĕ.

Пленум ВКП(б) Обкомĕн кадрсем енĕпе ĕçлекен секретарĕ пулма Н. Н. БОБРОВ юлташа çирĕплетрĕ; М. В. Лисин юлташа, вăл вĕренме кайнă пирки, çав ĕçрен хăтарчĕ.

Пленум ВКП(б) Обком секретарĕн оборона промышленность енĕпе ĕçлекен заместителĕ пулма Н. Н. НИКИТИН юлташа çирĕплетрĕ; С. М. Крылов юлташа çав ĕçрен хăтарчĕ.

ВКП(б) ЧĂВАШ ОБКОМĔ.

Çуракине кăтартуллăн хатĕрленсе ăнăçлăн ирттерер

Республикăри колхозсенче тата машинно-тракторнăй станцисемпе совхозсенче 1945 çулта вăйлă тырпул туса илес ĕçĕн татăклă тапхăрне—çуракине хатĕрленеççĕ. Вăрнар, Красноармейски, Сĕнтĕр, Чурачăк, Çĕрпӳ, Сĕнтĕрвăрри районĕсем тата хăшпĕр ытти районсем те çуракине ăнăçлăн хатĕрленеççĕ: вĕсем вăрлăх хывса çитернĕ, вăрлăхсене тасатса пĕтернĕ, ялхуçалăх машинисене тирпейлесе хунă, выранти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли заданисене ăнăçлăн пурнăçласа пыраççĕ. Красноармейски, Шăхасан, Йĕпреç, Вăрнар, Вăрмар, Куславкка МТС-ĕсем тракторсене срокчен юсаса пĕтернĕ.

Анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, пирĕн республикăра çуракине хатĕрленес ĕç çителĕксĕр пулса пырать. Вăл Пăрачкав, Кувакино, Шăмăршă, Чкаловски, Первомайски, Çĕмĕрле тата Хĕрлĕ Чутай районĕсенче уйрăмах начар пулса пырать. Çав районсен руководителĕсем ВКП(б) Обкомĕн XX-мĕш пленумĕ иртнĕ ялхуçалăх çулĕн итогĕсемпе 1945 çулхи çуракине хатĕрленес задачăсем пирки йышăннă решенисене пурнăçа кĕртмен, пленум çирĕппĕн асăрхаттарса хăварнинчен хăйсем валли кирлĕ выводсем туман, колхозсенче вăрлăх çителĕклĕ хатĕрлес тĕлĕшпе кирлĕ мерăсем йышăнман, колхозсен хăйсен шалти ресурсĕсене мобилизацилемен, колхозсем пĕр-пĕрне вăрлăх парса пулăшас ĕçе тата колхозниксенчен вăрлăх сутăн е кивçен илес ĕçе организацилемен.

Чылай районсен руководителĕсем вăрлăх пахалăхĕшĕн çителĕклĕ тăрăшмаççĕ. Сăмахран, Элĕк районĕнчи колхозсенче, вăрлăхсене лабораторире тĕрĕслеттерсен, вăрлăхсенчен 78 проценчĕ тасалăх енчен кондициллĕ пулманни палăрнă. Тасалăх енчен кондициллĕ мар вăрлăх Хĕрлĕ Чутай районĕнчи колхозсенче 74 процент, Тăвай районĕнче—56 процент, Советски районра—55 процент, Шупашкар районĕнче — 51 процент пулни палăрнă. Нумай районсем Госсортфонд склачĕсенчен сортлă вăрлăхсене халĕ те илсе кайса пĕтермен-ха, шăтаслăх енчен кондициллĕ мар вăрлăхсене те улăштарса пĕтермен.

Тракторсемпе ялхуçалăх машинисене юсас ĕç начар пырать. Тракторсене юсамалли плана Пăрачкав МТС-ĕ 37 процент, Етĕрне МТС-ĕ—43 процент, Сиява МТС-ĕ—45 процент, Çĕмĕрле МТС-ĕ—54 процент, Сурмайдан МТС-ĕ—55 процент, Первомайски МТС—55 процент, Кувакино МТС-ĕ—59 процент çеç тултарнă. Тракторсене юсани пахалăхĕ çине çителĕклĕ çавăрăнса пăхмаççĕ. Тăвай, Октябрьски тата Первомайски МТС-сенче тракторсене начар юсанă. Анчах палăртнă çитменлĕхсене пĕтерес тĕлĕшпе ĕçлемеççĕ. Лашапа ĕçлемелли ялхуçалăх машинисене, лаша таврашне тата транспорт инвентарьне юсас ĕç те начар пырать.

Чылай районсенче, уйрăмах та Çĕмĕрле, Елчĕк, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай, Пăрачкав, Йĕпреç районĕсенче, лашасем начарланнă, анчах ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем вĕсене тӳрлетес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнмаççĕ. Лаша сахал пулин те, ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсем нумайĕшĕ майракаллă шултăра выльăхсене ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентес ĕçе кирлĕ пек ертсе пымаççĕ.

Çураки çывхарса килет. Парти, совет тата çĕрĕç органĕсен задачи—çуракине тухас умĕнхи ĕçсене часрах туса пĕтересси, вăрлăхсене, машинăсене, туртăм вăйне вăхăтра хатĕрлесе хурасси, выранти удобренисем хатĕрлесе хире кăлармалли плана тултарасси, çуракине кашни колхозрах кĕске срокра тата пысăк пахалăхпа туса ирттересси, çапла вара кăçал вăйлă тырпул туса илмешкĕн çирĕп никĕс хывса хăварасси пулса тăрать.

ВКП(б) Чăваш Обкомĕн çак кунсенче пулса иртнĕ 21-мĕш пленумĕ, ВКП(б) Обкомĕн секретарĕн Чарыков юлташăн докладне сӳтсе-явса, çуракине хатĕрленес тата ирттерес тĕлĕшпе конкретнăй мерăсем палăртса хăварчĕ. Пленум ВКП(б) райкомĕсене, райисполкомсене тата çĕрĕç органĕсене СССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Центральный Комитечĕн ялхуçалăхне аталантармалли 1945 çулхи план пирки йышăннă постановленине хăйсен пĕтĕм ĕçĕн никĕсне хума хушрĕ, çав постановление кашни колхозник патне, МТС-семпе совхозсен кашни тракторисчĕпе рабочийĕ патне çитерме хушрĕ, вĕсене ялхуçалăхĕн 1945 çулхи чи пысăк та ответлă задачине пурнăçлама — тĕштырăсемпе ытти культурăсен тухăçлăхне ытларах ӳстерме хушса хăварчĕ.

Çураки пуçланиччен кашни колхозрах агрономсен, колхозсен правленийĕсемпе тата опытлă колхозниксемпе пĕрле ĕçлесе, çуракине ирттерес тĕлĕшпе агротехникăллă конкретнăй мероприятисем палăртса хумалла. Пуринчен ытла çакăн çине тимлĕн çавăрăнса пăхмалла: культурăсене пусуçавранăшĕсен хирĕсенче тĕрĕс вырнаçтарса тухмалла, пусуçавранăшĕсем çук тĕлте—кашни культурăна хăй чи лайăх ӳсекен çĕре акмалла, тăпрара нӳрлĕх тытса хăвармалла, çумкурăксене пĕтермелле, тăпрана, пуринчен ытла техникăллă культурăсем, çĕрулми тата пахча-çимĕçсем акмалли çĕрсене, выранти удобренисемпе çĕнетмелле, мĕнпур тракторсемпе тата лаша туртакан сеялкăсемпе туллин усă курмалла, вăрлăх акмалли нормăсене çирĕппĕн пурнăçласа пымалла, кĕрхи тырăсен калчисене çуркунне обязательнăй йĕркепе сӳрелемелле, çумламалла тата апатлантармалла; кашни культурăнах агротехника енчен чи лайăх вăхăтра акмалла, вăрлăхсене лайăх витсе хăвармалла, акнă çуртыррисене тĕрĕс пăхас ĕçе йĕркелесе ямалла.

Çуракине тĕплĕн хатĕрленесси—колхозсен тата МТС-семпе совхозсен чи паха задачи пулса тăрать. Çав вăхăтрах вăл мĕнпур парти, совет тата çĕрĕç органĕсен тĕп задачи пулса тăмалла.

ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти райкомĕсемпе райисполкомсене апрелĕн 1-мĕшĕччен кашни колхозрах пур тĕрлĕ вăрлăхсене те çителĕклĕ таран хывса çитерме хушса хăварчĕ. Çитмен вăрлăхсене пĕр колхоз теприне пулăшас йĕркепе ытти колхозсенчен илмелле, çавăн пекех тата колхозниксенчен сутăн е кивçен илмелле. Апрелĕн 1-мĕшĕччен вăрлăхсене тепĕр хут тасатса хумалла, вĕсене акмалли кондицие çитермелле, сортлă вăрлăхсене Госсортфонд склачĕсенчен илсе кайса пĕтермелле, начар шăтакан вăрлăхсене Заготзерно пунктĕсем урлă лайăх вăрлăхсемпе улăштармалла. Пур колхозсенче те çĕрулми тăррисене хатĕрлемелле, çĕрулми куçĕсене лартас тата çеçкисене ӳстерес ĕçе сарса ямалла.

Тракторсене, ялхуçалăх машинисене тата транспорт инвентарьне часрах юсаса çитересси—çуракине хатĕрленес ĕçри чи кирлĕ задача пулса тăрать. Юсаса пĕтернĕ кашни машинăна государство комиссийĕн тĕплĕн тĕрĕслесе йышăнмалла. Тракторсемпе ялхуçалăх машинисем валли запаслă пайсем тумалли плана республикăри промышленность предприятийĕсем питĕ начар пурнăçланине палăртса, ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ çав предприятисен руководителĕсене запаслă пайсем тумалли плана çине тăрса пурнăçлама хушрĕ.

Çуракине ăнăçлăн ирттересси туртăм вăйĕ мĕнле тăнинчен те нумай килет. Начарланнă лашасене халех, ĕçрен хăтарса, вăйлă тăрантарма тытăнмалла, мартăн 25-мĕшĕнчен пуçласа вара пур лашасене те канма тăратмалла. Çураки вăхăтĕнче тăрантарма кашни колхозрах çителĕклĕ утă, концентратсем тата ытти тĕрлĕ апат уйăрса хумалла. Çав вăхăтрах пленум ВКП(б) райкомĕсемпе райисполкомсене колхозсемпе колхозниксен майракаллă шултăра выльăхĕсене кӳлме тата ялхуçалăхĕнче ĕçлеме вĕрентмелли плана пурнăçа кĕртме хушрĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсене ирттернĕ çĕрте ĕçе тĕрĕс организацилени пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа пур колхозсенче те уйхир бригадисене тĕрĕслесе тухмалла, вĕсенче çын çитмест пулсан—çын хушса памалла, администрациллĕ тата пулăшуллă ĕçре ĕçлекен колхозниксен хисепне чакармалла, колхозсенче яланхи звеносем организацилемелле, вĕсене ялхуçалăх ĕçĕсем пĕтиччченех ялхуçалăх культурисем тата акмалли лаптăксем çирĕплетсе памалла.

Апрелĕн 1-мĕшĕччен колхозсенче тата совхозсемпе МТС-сенче производство планĕсем туса пĕтермелле, МТС-сен колхозсемпе договорсем тумалла, трактор бригадисемпе уйхир бригадисен ĕç планĕсене çырса хатĕрлемелле, çав плансенче бригадăсене, колхозниксене тата совхозсенчи рабочисене производство хатĕрĕсем уйăрса памаллине, колхозниксене тата МТС-семпе совхозсен рабочийĕсене тĕрлĕ участоксем тăрăх тата тĕрлĕ ĕçсем тăрăх вырнаçтарса тухмаллине палăртса хумалла.

Подсобнăй хуçалăхсенче çуракине лайăх ирттерни питĕ кирлĕ ĕç пулса тăнине шута илсе, ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ ВКП(б) горкомĕсемпе райкомĕсене, хула тата район Совечĕсен исполкомĕсене, предприятисемпе учреждениесен руководителĕсене, предприятисемпе учрежденисен подсобнăй хуçалăхĕсенче çуракине хăвăртрах хатĕрленсе çитме тата çуракине ăнăçлăн ирттерме, рабочисемпе служащисен коллективлă тата уйрăм пахчисенче пахча-çимĕç туса илес ĕçе пур майпа та пулăшма, пахчасем валли участоксем вăхăтра уйăрса пама, пахчаçăсене инвентарь, вăрлăх тата пахча-çимĕç калчисем парса пулăшма хушса хăварчĕ.

Хирти çуркуннехи ĕçсене вăхăтра тата ăнăçлăн ирттермешкĕн парти организацийĕсен колхозниксемпе колхозницăсем хушшинче, МТС-семпе совхозсен тракторисчĕсемпе рабочийĕсем хушшинче организациллĕ тата массăллă-политикăллă ĕçе татăклăн лайăхлатмалла. ВКП(б) Обкомĕн пленумĕ парти, совет тата комсомол организацийĕсене, мĕнпур колхозниксемпе колхозницăсене, МТС-семпе совхозсен рабочийĕсене çуракине хăвăртрах хатĕрленсе çитессишĕн, çуракине ăнăçлăн ирттерессишĕн тата 1945 çулта вăйлă тырпул туса илессишĕн социализмлă ăмăртăва анлăн сарса яма хушрĕ.

Колхозлă ялăн мĕнпур вăйне—вăрçă вăхăтĕнчи тăваттăмĕш çуракине хатĕрленнĕ çĕре! Çуркуннехи хирти ĕçсене ăнăçлăн ирттерсе, вăйлă тырпул, нумай çĕрулми тата йышлă пахча-çимĕç туса илер. Отечественнăй аслă вăрçăн юлашки татăклă тапхăрĕнче Хĕрлĕ Çарăн вăйне тата ытларах ӳстерер!

Совет Информаци Бюровĕнчен

МАРТĂН 21-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 21-мĕшĕнче КЕНИГСБЕРГ хулинчен кăнтăр-хĕвеланăçнерехре БЕЛОРУССИРИ 3-мĕш фронт çарĕсем нимĕçсен Хĕвелтухăç Пруссири ушкăнне пĕтерсе тăкасшăн çапăçнă, ФРИШ ГАФ заливĕ хĕрри патнелле куçса пырса, БОЛЬБИТТЕН, ШТУТТЕНЕН, НЕВЕККЕН, ГРУНАУ, РАДАУ, АЛЬТ-ПАССАРГЕ ялĕсене туртса илнĕ. Тĕрĕслесе тухнă тăрăх, БРАУНСБЕРГ хулишĕн пынă çапăçусенче фронт çарĕсем çакăн пек трофейсем тытса илнĕ: танксем—204, бронетранспортерсем — 25, минометсем—109, пулеметсем—204, автомашинăсем—1.050, паровозсем — 5, чугун çул вагонĕсем—633, тĕрлĕрен çар пурлăх склачĕсем—17.

ДАНЦИГ хули енче пирĕн çарсем çапăçса малалла талăнса пынă, МЮЛЬБАНЦ, КОЛИНГ, КЛАДАУ, ИЕТАУ, ЗААЛАУ, КЛАЙН-БЕЛЬТАУ, НИДЕР-ПРАНГЕНАУ, ВИССАУ, ГРОСС-КАТЦ ялĕсене туртса илнĕ. Мартăн 20-мĕшĕнче ку районра пирĕн çарсем 600 нимĕç салтакĕпе офицерне ытла тыткăна илнĕ.

БРЕСЛАУ районĕнче хулара хупăрласа илнĕ тăшман группировкине пĕтерсе тăкаслăн çапăçнă.

Мартăн 20-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче нимĕçсен 176 танкне çĕмĕрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитлă артиллери тăшманăн 69 самолетне персе ӳкернĕ.

☆ ☆ ☆

ПИРĔН АВИАЦИ ВЕНГРИРИ ВЕСПРЕМ ЧУГУН ÇУЛ УЗЕЛНЕ ПЫРСА ТАПАННИ

Мартăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн йывăр бомбардировщисем Венгрири Веспрем чугун çул узелне пырса тапаннă. Бомбăсем пырса пăрахнине пула, узелта пушарсем тухнă. Пушарсенче взрывсем пулнă.

☆ ☆ ☆

БАЛТИКА ФЛОЧĔН АВИАЦИЙĔН ĔÇĔСЕМ

Мартăн 19-мĕшĕнче Балтика флочĕн авиацийĕ Пиллау портĕнче нимĕçсен 5—6 пиншер тонна таякан виçĕ суднине шыва путарнă тата Борнхольм утравĕ районĕнче нимĕçсен 10—12 пиншер тонна таякан икĕ суднине тата тăшманăн хуралта çӳрекен тепĕр карапне путарнă.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулма И. Н. Широв юлташа уйăрса лартасси çинчен

Иван Никандрович Широв юлташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕ пулма уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули. 1945 çулхи мартăн 21-мĕшĕ.

ПАРТИПЕ СОВЕТ РАБОТНИКĔСЕНЕ ОРДЕНСЕМ ПАНИ

1945 çулхи мартăн 21-мĕшĕнче Шупашкарта СССР Верховный Совечĕн депутачĕ—Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ Правительство наградăланă партипе совет работникĕсен ушкăнне орденсем пачĕ.

Вăрçă вăхăтĕнчи условисенче тăшмана çĕнтерес тĕлĕшпе тырпул хатĕрлес ĕç уйрăмах паха вырăн йышăнса тăнине тата хăйĕн пĕлтерĕшĕпе вăл фронтри ĕçпе пĕр танах пулнине шута илсе, государствăн тырпул хатĕрлемелли 1944 çулхи планне ăнăçлăн тултарнăшăн наградăланă çак работниксем орденсем илчĕç:

Отечественнăй вăрçăн I-мĕш степень орденне—ĕççынни депутачĕсен Вăрмар райсовет исполкомĕн председателĕ П. Н. Бикмиров, Наркомзагăн Шупашкар районĕнчи уполномоченнăйĕ И. А. Ведин, Наркомзагăн Çĕрпӳ районĕнчи уполномоченнăйĕ Н. Ф. Виноградов, Наркомзагăн Вăрнар районĕнчи уполномоченнăйĕ С. А. Игорев, ВКП(б) Шупашкар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В. И. Караушев, ĕççынни депутачĕсен Шупашкар райсовет исполкомĕн председателĕ С. М. Миронов, ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Д. Я. Митьков, ĕççынни депутачĕсен Вăрнар райсовет исполкомĕн председателĕ П. О. Осипов, ВКП(б) Сĕнтĕр райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Я. П. Петров, ĕççынни депутачĕсен Сĕнтĕр райсовет исполкомĕн председателĕ И. Е. Свешников, ВКП(б) Вăрмар райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. Д. Смирнов, Наркомзагăн Сĕнтĕр районĕнчи уполномоченнăйĕ П. Н. Соколов, ĕççынни депутачĕсен Çĕрпӳ райсовет исполкомĕн председателĕ Н. С. Хабаров юлташсем илчĕç.

Отечественнăй вăрçăн II-мĕш степень орденне—ĕççынни депутачĕсен Красноармейски райсовет исполкомĕн председателĕ И. А. Александров, ВКП(б) Чурачăк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Ф. А. Артемьев, ĕççынни депутачĕсен Калинино райсовет исполкомĕн председателĕ Т. Ф. Валеев, ВКП(б) Сĕнтĕрвăрри райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. М. Вахнин, Наркомзагăн Элĕк районĕнчи уполномоченнăйĕ Ф. В. Васильев, ВКП(б) Елчĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. Н. Волков, ВКП(б) Красноармейски райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Н. Г. Григорьев, ĕççынни депутачĕсен Элĕк райсовет исполкомĕн председателĕ П. Е. Ефремов, Наркомзагăн Куславкка районĕнчи уполномоченнăйĕ Н. А. Желтухин, ВКП(б) Муркаш райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ В. И. Ильин, Наркомзагăн Октябрьски районри уполномоченнăйĕ К. Н. Исаев, Наркомзагăн Елчĕк районĕнчи уполномоченнăйĕ Г. П. Ишмуратов, ВКП(б) Куславкка райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Г. М. Крючков, ВКП(б) Советски райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ К. Н. Кудряшов, ĕççынни депутачĕсен Сĕнтĕрвăрри райсовет исполкомĕн председателĕ Я. Г. Маклашкин, ĕççынни депутачĕсен Советски райсовет исполкомĕн председателĕ А. А. Малинин, ВКП(б) Калинино райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ П. Н. Никитин, ĕççынни депутачĕсен Елчĕк райсовет исполкомĕн председателĕ З. С. Осипов, ВКП(б) Ишлей райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ И. К. Пидуганов, ĕççынни депутачĕсен Куславкка райсовет исполкомĕн председателĕ Н. М. Прытченков, Наркомзагăн Ишлей районĕнчи уполномоченнăйĕ П. Р. Романов, ĕççынни депутачĕсен Чурачăк райсовет исполкомĕн председателĕ И. А. Скворцов, ВКП(б) Етĕрне райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ А. В. Сомов, Наркомзагăн Муркаш районĕнчи уполномоченнăйĕ М. Н. Угольников, ĕççынни депутачĕсен Муркаш райсовет исполкомĕн председателĕ Г. Ф. Федоров, ВКП(б) Элĕк райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ М. Ф. Федотов, Наркомзагăн Советски районри уполномоченнăйĕ Е. Е. Шепелев, Наркомзагăн Красноармейски районри уполномоченнăйĕ И. Я. Яковлев юлташсем илчĕç.

Награда илнисен ячĕпе Виноградов, Игорев, Караушев, Смирнов, Скворцов, Сомов юлташсем, сăмах тухса каласа, хăйсен ĕçĕсене пысăка хурса хакланăшăн партипе правительствăна тав турĕç.

Юлашкинчен Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. А. Андреева юлташ наградăланисене фронта пулăшас тĕлĕшпе малашне те тăрăшса ĕçлесе çитенӳ тума ыра сунчĕ.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

ПЛАН КАНТĂК АЙĔНЧЕ ЧУХНЕ...

СОВЕТСКОЕ. Райçĕрĕç пайĕ заведующийĕн Н. Ятманов юлташăн ĕç сĕтелĕ çине хуйă кантăк айĕнче кăçал районра мĕн чухлĕ кадр вĕрентсе хатĕрлемелли план выртать. Райçĕрĕç пайĕн кăçал 18 тĕрлĕ ĕçпе кадрсем вĕрентсе хатĕрлемелле: бригадирсем—100 çын, агротехниксем — 40 çын». пĕтĕмпе 628 çын.

Анчах районра кадрсем вĕрентсе хатĕрлес ĕç начар пырать. Колхоз бригадирĕсене курссем урлă вĕрентсе кăларса çитермен. Пахчаçă-бригадирсене, агротехниксене, сад ĕрчетекенсене, сысна пăхакансемпе дояркăсене, вылăх пăхакансене, хурт-хĕмăр ĕрчетекенсене, кайăк-кĕшĕксемпе пăру пăхакансене, ветсанитарсене вĕрентесси хут çинче çеç тăрать-ха.

Çав кадрсем колхозсене кулленхи ĕçре питĕ кирлĕ пуласçĕ. Кĕçех акă яровизаторсен хĕрӳллĕ ĕçе тытăнмалла пулать. Вĕсене районра 70 çын вĕрентсе хатĕрлемелле пулнă. Анчах яровизаторсен курсне уçас пирки никам та шутласа пăхмасть. Халĕ вылăх-чĕрлĕхсене чуптарса хăварасси пуçланчĕ, мунта çав енĕпе ĕçлекен çынсене вĕрентсе хатĕрлемен.

Районри пĕр колхозра та агротехникăна вĕренес ĕçе тивĕçлипе йĕркеленн çук. Райçĕрĕç пайĕнче ĕçлекенсем каласа панă тăрăх, агрокружоксем 26 колхозра пур, вĕсенче 520 çын вĕренеççĕ. Анчах вĕсем те хут çинче кăна шутланса тăраççĕ. Лапракассинчи «Сталинград», Кăлтĕшри Степан Разин ячĕпе тăракан, Выселка Пакăшри «Звезда», Исментерти «Радио» колхозсенче агрокружоксен занятийĕсем пĕрер хут пулса иртнĕ те саланса кайнă. Ытти колхозсенче вара агрокружоксене пачах организациленмен.

Халь асăннă колхозсенчи агрокружоксене ертсе пыма кладовщиксене, счетоводсене, колхозсенче штатра ĕçлекен çынсене хушнă. Анчах вĕсем агротехникăна мĕнле пĕлнине никам та тĕрĕслесе пăхман. Программăсем енĕпе те тивĕçлĕ кăтарту пулман. Хăшпĕр колхозсенче занятисене мĕнле ирттермеллине те, вĕсенче камсем пулма кирлине те пĕлмеççĕ.

Райçĕрĕç пайĕн главнăй агрономĕ М. Дмитриев ответлăха хăйĕн çинчен сирсе яма пăхать. Мĕншĕн ку ĕçпе унăн хăйĕн интересленмелле мар-ха? Участоксенчи агрономсем те ку ĕçрен аякра тăраççĕ. Вĕсем колхозсенче сайра хутра пулнă пулсан та, чи кирлĕ ыйтупа—агрокружоксем организациллес тĕлĕшпе каласма манса кайнă.

Кунсем васкаççĕ. Хĕвел çӳлеллех хăпарса пырать. Унăн пайăркисем, тӳрчерен кĕрсе, Ятманов сĕтелĕ çинчи кантăк айĕнчи плана палăрмнех саратса лартĕç. Çынсем çĕрĕн-кунĕн хĕрӳ ĕçре пулĕç. Анчах Ятманов колхозсем валли кирлĕ кадрсене вĕрентсе хатĕрлес тĕлĕшпе васкамасть.

Яков СИГАЙ.
(Хамăр корр.).

Кадрсем хатĕрлесси—куллен тумалли ĕç

Отечественнăй вăрçă кунĕсенче колхозсенчи ертсе пырас ĕçре ĕçлекен нумай çынсем. алла хĕçпăшал тытса, Тăван çĕршыва хӳтĕлеме кайрĕç. Çапла вара чылай колхозсенче председательсем, бригадирсем, ферма заведующийĕсем улшăнчĕç. Çакăн хыççăн кадрсем хатĕрлес, кадрсен пĕлĕвне ӳстерес задача çивĕччĕн тухса тăчĕ.

Пирĕн Елчĕк районĕнче çав ответлă задачăна пурнăçлас тĕлĕшпе вăрçă кунĕсенче сахал мар ĕçсем тунă. тăваççĕ те. Колхоз председателĕсене, бригадирсене, ферма заведующийĕсене, звеньевойсене темиçе вуншар çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Çĕнĕ кадрсенчен халĕ нумайĕшĕсем хăйсен ĕçне лайăх туса пыраççĕ. Акă, Аслă Пăла Тимешĕнчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхоз председателĕ пулса ĕçлеме Отечественнăй вăрçă инвалидне, вăрçăччен колхозра бригадир пулса ĕçленĕ Василий Зайцева суйланă. Фронтовик Зайцев юлташ колхоз ĕçне фронта тивĕçлĕ пек йĕркелесе ярасси-шĕн ывăнма пĕлмесĕр ĕçлерĕ. Çапла вара колхоз районра кăна мар, республикăра та малта пыракан колхозсен ретне тăчĕ. Ку колхоза виççĕмĕш хут ĕнтĕ Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне панă. Çĕнĕ Эйпесри Чапаев ячĕпе тăракан колхоз та, ăна фронтовик К. Воробьев юлташ ертсе пыма пуçласан, районра малтисен ретне тăчĕ. Ку колхоз государствăна пур тĕрлĕ парăмсене те срокчен парса татать. Колхозниксем хушшинче ĕç дисциплини çирĕп. Крупская ячĕпе тăракан, «Комбайн», «МОПР» колхозсем те, çĕнĕ председательсем суйласа лартнă хыççăн, хăйсен ĕçне нумай лайăхлатрĕç.

Колхозсем валли кадрсем хатĕрлесси кăçал та начар мар пулса пырать. Февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне районри курссенче 51 бригадир, кок-сагыз акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлеме 42 звеновод, ферма заведующийĕсем пулса ĕçлеме 33 çын, сысна пăхакансем 45 çын, дояркăсем 42 çын, пăру пăхакансем 37 çын, старши конюхсем 38 çын, ветсанитарсем 28 çын тата кĕтӳ кĕтекенсем 33 çын вĕрентсе хатĕрленĕ. Халĕ агротехниксен курсĕ ĕçлет. Унта 30 çын вĕренет. Колхозсем валли пахча-çимĕç бригадирĕсем, вăрлăх акса тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеноводсем, яровизаторсем, чăхчĕп пăхакансем, пчеловодсем тата ытти кадрсем вĕрентсе хатĕрлеме палăртнă.

Машинно-тракторнăй станци те кадрсем хатĕрлес тĕлĕшпе çине тăрса ĕçлет. Унта трактористсем хатĕрлекен курс пур. Унта 57 çын вĕренет. Калас пулать, ку ĕçре пысăк çитменлĕхсем те пур-ха. Вĕренекенсем занятисене сиктерсе çӳреççĕ. Январь уйăхĕнче занятине пĕр сиктермесĕр çӳренисем пурĕ те 10 çын кăна пулнă. Журнал çине кам мĕнле вĕреннине палăртса пымаççĕ. Ку çитменлĕхсене халех пĕтерес пулать.

Çураки çывхарса килет. Çитменлĕхсене пĕтерсе, çуракине ăнăçлăн ирттерме колхозсемпе МТС валли кадрсем кирлĕ чухлĕ хатĕрлемелле.

И. ПЕТРОВ.

СССР Наркоминделĕнче

Мартăн 19-мĕшĕнче СССР Ют çĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕ В. М. Молотов, Совет Союзĕпе Турци пĕр-пĕрине туслă та нейтралитетлă пурăнасси çинчен 1925 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче тунă договорăн срокĕ çывхарса килнĕ май, Турци посолне Сарпер господина Турци республикин правительствине пимашкăн Совет правительстви ячĕпе заявлени тунă.

Çав заявленире çапла каланă: Совет Союзĕпе Турци 1925 çулхи декабрĕн 17-мĕшĕнче тунă договор çав çĕршывсем пĕр-пĕрипе туслă пурăнас тĕлĕшпе паха договор пулса тăнине йышăнса, Совет правительстви çав вăхăтрах çакна палăртма кирлĕ тесе шутлать: çав договора тунăранпа, пуринчен ытла тĕнчери иккĕмĕш вăрçă вăхăтĕнче условисем питĕ нумай улшăннă пирки, вăл договор халь çĕнĕ условисемпе килĕшсе тăмасть, ăна нумай лайăхлатмалла.

Малта кăтартнине шута илсе, çав договора пăрахăçа кăлармалли йĕрке çинчен 1935 çулхи ноябрĕн 7-мĕшĕнче алă пуснă протоколра кăтартса панă тăрăх, Совет Правительстви вăл договора ун çумне хушса хунисемпе пĕрле пăрахăçа кăларма шутлани çинчен Турци Правительствине каласа панă.

Турци посолĕ Сарпер господин çапла каланă: В. М. Молотов заявленине эпĕ халех Турци правительствине парăп, тенĕ.

СССР Наркоминделĕн Информаци Бюровĕ.

Польшăпа Чехословаки пĕр-пĕрин патне дипломатиллĕ представительсем яни

Польша Республикин СССР-ти посольстви çакăн пек официальнăй пĕлтерӳ пичетлет:

«Чехословаки Правительстви Польшăн Варшаври Вăхăтлăх Правительстви çумĕнче Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланник пулса ĕçлеме Иосиф Гейрет господина лартнă, Польшăн Вăхăтлăх Правительстви Чехословаки Правительстви çумĕнче Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посланник пулса ĕçлеме Стефан Вербловский господина уйăрса лартнă». (ТАСС).

«ДЕЙЛИ ТЕЛЕГРАФ ЭНД МОРНИНГ ПОСТ» ФИНЛЯНДИРИ ЛАРУ-ТАРУ ÇИНЧЕН

ЛОНДОН, мартăн 17-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли телеграф энд Морнинг пост» хаçат хăйĕн Стокгольмри корреспонденчĕн Финляндири лару-тăру çинчен çырнă статьине пичетлет. Союзниксен Контроль Комиссийĕн представителĕсем Финляндие пынă хыççăн Финлянди администрацийĕн çӳлти сийĕсене Германи майлă çынсенчен тасатнă. Анчах та «пĕрремĕш хутлăхра тата подвалта малтан пурăннă çынсемех—Финлянди пурнăçне Гитлерпа çыхăнтарнă çынсемех пурăнаççĕ-ха». Рютипе Таннер майлă çынсем халĕ те администрацири ответлă вырăнсене йышăнса тăраççĕ. Финлянди çарĕн командованийĕнче те Германи майлă çынсем пур-ха, вĕсем хушшинче—Эстерман генерал. Вăл Германипе союз тăвассине пуçарса яракансенчен пĕри пулнă.

«Швецире сăнаса тăракан çынсем,—çырать корреспондент,—вырăссем Финляндире мĕн туни çине шикленсе пăхса тăнăскерсем, çапла калаççĕ: вырăссем финсен ĕçлĕ вырăнсенче ларакан хăшпĕр çыннисене халех ĕçрен кăларма ыйтсан тата вĕсем тĕлĕшпе Финлянди икĕ хут ăнăçсăр вăрçнă хыççăн вырăнлă пулса тăракан çирĕпрех мерăсем йышăнсан — вĕсем ытлашши туман пулĕччĕç, теççĕ».

ПОЛЬШАРИ ДЕМОКРАТИЛЛĔ ПАРТИСЕМ ФИШЕР ГИТЛЕРОВЕЦА ВАРШАВĂРА СУД ТУМА ЫЙТАÇÇĔ

ВАРШАВА, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăри демократиллĕ тăватă партин Варшава хулинчи организацийĕсен представителĕсем Польша правительствинчен Варшăври нимĕç губернаторĕ пулса ĕçленĕ Фишера Отвоцкра мар, Варшава хулинче суд тума ыйтнă. Хĕрлĕ Çар хăвăрт наступлени тунă вăхăтра Фишера хăйĕн сотрудникĕсемпе пĕрле ярса тытнă пулнă. Тăватă партин представителĕсем хăйсем ыйтнине çапла ăнлантарса параççĕ: Фишер Польша столицинче çав тери тискер ĕçсене пуçарса яраканĕ пулнă, çавăнпа та ăна Варшава хулинче суд туни тĕрĕсрех пулать, теççĕ.

ЮГОСЛАВИРЕ ХАЛĂХАН ИРĔКЛĔХ КОМИТЕЧĔСЕНЕ СУЙЛАМА ХАТĔРЛЕНЕÇÇĔ

БЕЛГРАД, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Югославири радио пĕлтернĕ тăрăх, Югославире халăхăн ирĕклĕх комитечĕсене суйлама хатĕрленме тытăннă. Суйлав умĕнхи пухусене халăх активлăн хутшăнать. Çав пухусенче вăл халăх ирĕклĕхĕшĕн чăннипе кĕрешнине кăтартса панă çынсене суйлама кирлине палăртать. Суйлав умĕнхи пухусем иртекен хуласенче плакатсемпе лозунгсем çыпăçтарнă. Вăл плакатсемпе лозунгсем халăха пулас суйлавсене активлăн хутшăнма чĕнеççĕ.

ЯПОНИН ШАЛТИ ШЫВĔСЕНЧИ ÇАПĂÇУ

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Гуам утравĕ çинчи корреспонденчĕ США-н Лăпкă океанри флочĕн командующийĕн Нимиц адмиралăн мартăн 20-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерĕвне парать. Пĕлтерӳре каланă тăрăх, Америка флочĕ японецсен шалти шывĕсенче Япони флотне хирĕç çапăçма пуçланă, японецсене пысăк çухатусем кӳрет.

Митчер адмирал командир пулса ертсе пыракан оперативнăй эскадра, çурçĕр-хĕвелтухăçнелле куçса, мартăн 19-мĕшĕнче Япони флочĕн тĕп соединенийĕсене атакăланă. Çав флота кĕрекен авианосецсем çинчи самолетсем икĕ кун хушши Японин утравĕсен кăнтăр пайĕнчи Кобе тата Куре çине бомбăсем пăрахнă.

Малтанлăха палăртнă тăрăх, японецсен пĕр е икĕ линкорне, çавăн пекех икĕ е виçĕ авианосецне, икĕ çăмăл тата икĕ эскортлă авианосецне, пĕр йывăр тата пĕр çăмăл крейсерне, пĕр подводнăй лодкине, 4 эсминецне тата грузсем турттаракан 7 суднине сиенленĕ. Японецсен грузсем турттаракан 6 суднине шыва путарнă. Сывлăшри çапăçусенче японецсен 200 самолетне персе ӳкернĕ тата çĕр çинче 275 самолетне пĕтерсе тăкнă. Американецсен пĕр карапне чылаях вăйлă сиенленĕ. Ытти темиçе карапа пĕчĕк сиен кӳнĕ.

ЯПОНИ ХУЛИСЕНЧИ ХАЛĂХА ВĂЙПА ЯЛСЕНЕ КУÇАРАÇÇĔ

ТОКИО, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). «Майници Симбун» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Япони правительствин хуласенчи халăха ялсене куçарас тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăйĕ Кумагай çапла каланă: Япони столици пулса тăракан Токио хулине пушатмалли план тăрăх, Японин столицинчи пĕтĕм халăха ялсене ăсатмалла, паха предприятисенче ĕçлекен çынсене кăна столицăра хăвармалла. Эвакуацинленĕ çынсене обязательнăй йĕркепе ялхуçалăх ĕçĕсене хутшăнтармалла, Токио хулинче юлмалли çынсене, кирлĕ пулсан, хулара вăйпах тытса хăвармалла.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: нимĕçсен икĕ секторта—Бингенра тата Бад-Крейцнахран хĕвелтухăçнерехре (Рейнпа Мозель хушшинчи михĕх сурçĕр флангĕнче), çавăн пекех Саарлаутерн патĕнчи укреплени районĕнче вăйлăн хирĕç тăрса çапăçаççĕ. Çак участокра союзниксем Зигфрид линийĕн Саарбрюккенпа Рейн хушшинчи оборона сооруженийĕсем патне вунă тĕлте çитнĕ. Союзниксен хăшпĕр чаçĕсем нумай вăхăтлăха тунă укреплениксем урлă каçса кайнă.

Мартăн 19-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем халăх пурăнакан 25 пункта йышăннă. Мартăн 18-мĕшĕнче 5.040 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен çарĕсем хăвăрт куçса пынипе пула, Рейн шывĕнчен хĕвеланăçнерехре тата Мозель шывĕнчен кăнтăртарахра тăшман хирĕç тăрса çапăçассине пĕтĕмпех тенĕ пекех пусарса лартнă. Союзниксен чаçĕсем чылай вырăнсенче Рейн шывĕ хĕррине е вăл шыва ран çывăхра ларакан пунктсем патне çитнĕ.

Союзниксен армийĕсен малти отрячĕсем, çурçĕрпе-хĕвеланăçĕнчен тапăнса пыраскерсем, Кайзерслаутернран 12 миля хĕвеланăçнерехре пĕрлешнĕ.

Саар фронтĕнче, Цвейбрюккен çывăхĕнче, союзниксен çарĕсем Зигфрид линийе сарлака фронтпа татса кĕнĕ.

Союзниксен Ремаген çывăхĕнчи укреплени районĕнче, Бейельрен хĕвелтухăçнерехре (Бонн хулине хирĕç) тата унтан кăнтăртарахра тăшман вăйлах хирĕç тăмасть. Çав укрепленин вăтам пайĕнче нимĕçсем союзниксен çарĕсене йывăр тупăсемпе, миномĕтсемпе персе тăнă.

Мартăн 19-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем 13.873 çынна тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 1-мĕш армийĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çав армин Рейн çинчи укреплениие халь фронт тăрăх 38 километр таран, шалалла 13 километра çити аслăлатнă. Пĕрремĕш армин чаçĕсем çурçĕрелле 3 километр куçнă, хальхи вăхăтра вĕсем Рейн çинчи Штильдорфра, Бонн хулине хирĕç ларакансерте, çапăçаççĕ.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин американецсен 3-мĕш армийĕ çумĕнчи корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, çав армин чаçĕсем Майнц хули патне çитнĕ, Вомрцо хулине йышăннă тата Кайзерслаутерн хулине кĕрсе кайнă.

СОЮЗНИКСЕН АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 20-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Американецсен 1.200 бомбардировщикĕ ытла, 600 истребитель хӳтĕлесе пынипе, мартăн 19-мĕшĕнче тăшманăн Германири объекчĕсене тапаннă. Акăлчансен «Ланкастер» йышши бомбардировщикĕсем Арнсбергри тата Билефельдри чугун çул виадукĕсем çине 10 тонна таякан çĕнĕ йышши бомбăсем пăрахнă.

Мартăн 20-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем 28-мĕш хут Берлина тапаннă.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Лондонра официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, мартăн 21-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи бомбардировщикĕсем Германие тапаннă. Бомбăсене пуринчен ытла Беленри синтетически горючи завочĕсем çине тата Гиммингштедт хулинчи нефть тасатакан заводсем çине пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 21-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, акăлчансен «Москито» йышши бомбардировщикĕсем иртнĕ çĕрле Берлина тапаннă.

ХРОНИКА

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ Валериан Александрович Зорин юлташа Совет Союзĕн Чехословакири Чрезвычайнăй тата Полномочнăй Посолĕ пулма уйăрса лартнă.

* * *

Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕ Н. Г. Малов юлташа Чăваш АССР Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн ĕçĕсенчен хăтарнă.

Тимĕрçĕ Кирьянов

Егор Иванович Кирьянов юлташа Ишлей районĕнчи Мăнал ĕççыннийĕсем çеç мар, ытти ялсенчи ĕççыннисем те питĕ лайăх пĕлеççĕ. Вăл Мăналта 1902 çултанпах тимĕрçĕ пулса ĕçлет.

Вăл хăйĕн ĕçне аван вĕренсе çитнĕ. Хĕлхем сирпĕтекен тимĕр татăкĕсем унăн ĕçпе пиçнĕ аллисенче çăмăллăн выляса тăнине курсан, мастерăн пултарулăхне питех те лайăх туйса илетĕн. «Мĕн-мĕн тума пĕлмест-ши вăл!»—теççĕ колхозниксем, хăйсен тимĕрçипе мухтанса. Чăнах та, тем те тума пултарать ĕнтĕ çак çын. Унăн алли витĕр тухнă каннин япала заводра тунă пекех туйăнать.

Егор Иванович ватă ĕнтĕ. Анчах унăн ĕçри хастарлăхне курсан, ăна 75 çулта тесе никам та калас çук.

— Вăл ватă пулсан та çамрăксенчен ирттерет,—теççĕ ялти колхозниксем.

Чăнах, Егор Ивановичăн пултарулăхĕ те, ĕçлес хастарлăхĕ те пысăк. Иртнĕ çулта вăл пĕччен ĕçлесех 650 ĕçкунĕ тунă. Кирьянов юлташ халĕ ялхуçалăх машинисене çураки валли юсать. Вăл ĕнтĕ 22 плуг, 14 сӳре, 2 сеялка, вĕсемсĕр пуçне тата пĕр жнейка юсаса лартнă. Вĕсене ватă тимĕрçĕ пысăк пахалăхпа юсанă. Егор Иванович хăйĕн колхозне çеç мар, çывăхри колхозсене те плугсем тата ытти машинăсем юсаса парса пулăшать.

Вăл ытти колхозсем валли тимĕрçĕсем вĕрентес тĕлĕшпе те аван ĕçлет. Ку таранччен 8 çынна вĕрентнĕ. Вĕсем халĕ колхозсенче тимĕрçĕсем пулса ĕçлеççĕ.

Тимĕрçĕре ĕçленине пĕрлех, Кирьянов юлташ уй-хир ĕçĕсене те хутшăнать. Вăл ака-суха тăвать, тырă вырнă, авăн çапнă çĕрте машиновед пулса ĕçлет.

Кирьянов юлташăн тăватă ывăлĕ Отечественнăй аслă вăрçă фронтĕсенче нимĕç захватчикĕсемпе çапăçаççĕ.

Вĕсенчен иккĕшĕ правительство наградисене илнĕ.

— Хам çитĕнтернĕ ывăлсенчен юлма шутламастăп, вĕсене пулăшас кăмăлпа ывăнма пĕлмесĕр ĕçлетĕп,—тет Кирьянов юлташ.

П. АРБАТОВ.

Ватă пахчаçă

КӲКЕÇ. Çĕньял ял Советĕнчи «Знамя революции» колхозра пахча-çимĕç лартса тăвас тĕлĕшпе Василиса Евграфова 10 çул хушши ĕçлет. Вăл ватă. 60 çулта пулин те, ĕçре паха тĕслĕхсем кăтартать, хăйĕн звенинчи çамрăксене мĕнле ĕçлемеллине вĕрентет. Иртнĕ çулта колхозăн пахча-çимĕçсем акса тумалли çĕр лаптăкĕ 2 гектар пулнă. В. Евграфова тăрăшнипе çав лаптăк çинче вăйлă та тухăçлă пахча-çимĕçĕ туса илнĕ. Колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 1,5-шер килограмм купăста валеçсе панă. Унсăр пуçне, колхоз Хĕрлĕ Çар фондне пахча-çимĕç нумай панă тата кӳршĕри колхозсене сутса 33.000 тенкĕ тупăш илнĕ.

А. АЛЕКСЕЕВ.

1945 çулта çурхи шывсемпе пăртан сыхланас тĕлĕшпе ирттермелли мероприятисем çинчен

Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕ 1945 çулта çурхи шывсемпе пăртан сыхланас тĕлĕшпе туса ирттермелли мероприятисем çинчен сӳтсе-явнă. Халăх пурăнакан пунктсене, предприятисене, çуртйĕрсене, кĕперсене, пĕвесене, шыв тытмалли вырăнсене, калчасене, гидротехникăллă тата мелиоративлă сооруженисене çурхи шывсемпе пăрсем сиенлесрен сыхласа хăварас тĕлĕшпе ĕçлеме Чăваш АССР Совнаркомĕ республикăри комисси тунă. Унăн председателĕ—Чăваш АССР Совнарком председателĕн заместителĕ Терентьев юлташ, членĕсем: Коммунальнăй Хуçалăх Халăх Комиссарĕ Сорокин юлташ, Çĕрĕç Халăх Комиссарĕн заместителĕ Шориников юлташ, Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн пушарсенчен сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен отделĕн начальникĕ Шарко юлташ тата Шалти Ĕçсен Халăх Комиссариачĕн милици Управленийĕн начальникĕ Калашников юлташ.

Çурхи шывсемпе пăртан сыхланас тĕлĕшпе ĕçлекен комиссисем районсемпе хуласенче те тумалла. Комисси председателĕ—ĕççынни депутачĕсен районсемпе хуласенчи Совечĕсен представителĕ, членĕсем — НКВД-ăн вырăнти органĕнчен, пушар хуралĕнчен, коммунальнăй тата çĕрĕç отделĕсенчен пулмалла. Комиссие район (хула) Совет исполкомĕн председателĕ ертсе пымалла.

Ял Совечĕн авторитетне ӳстерес ыйту пирĕн республикăра

Ял Совечĕн авторитетне ӳстерес ыйтăва анлăн сӳтсе-явасси иртнĕ çулхи ноябрĕн 29-мĕшĕнче, Зотов юлташăн статьи «Известия» хаçатра пичетленсе тухнă хыççăн, пуçланчĕ. Асăннă статьяри ыйтусене сӳтсе-явас ĕçе государство органĕсем ялтан пуçласа çӳле çитиччен активлăн хутшăннине палăртса, Калинин юлташ çапла каларĕ: «Çакă вăл ĕнтĕ статьяра çĕкленĕ ыйтусем вăхăтлă та кирлĕ ыйтусем пулнине çирĕплетсе парать», терĕ.

Пирĕн республикăра та нумай ял Совечĕсем тата районри ертсе пыракан организацисем, çав ыйтăва сӳтсе-явас ĕçе кирлĕ пек хакласа, ял Совечĕн авторитетне татах та ытларах ӳстермелли тĕрĕс майсене палăртрĕç. Çакă вăл ял Совечĕн пĕлтерĕшĕ пирки хăшпĕр йăнăш шухăшсене сирсе яма май парать.

Зотов юлташ статьине сӳтсе-явнă май ял Совет председателĕсемпе районсенчи работниксем калаçнисене пĕрлештерсе пăхсан, çакă уççăн курăнать: ял Совет председателĕсем, пурте тенĕ пекех, хăйсен задачисене тĕрĕс ăнланаççĕ. Анчах вĕсем практикăра тĕп пулакан йывăрлăхсене таткса парас ĕçре вара пăтраштарусем тăваççĕ-ха. Калинин юлташ ун пирки çапла асăрхаттарать:

«Практикăра ял Совечĕн ĕçĕнчи чи палăрă ыйтусенчен пĕри вăл—колхоза ертсе пыракансемпе çыхăнса тăрас ыйту пулать. Эпĕ çапла шутлатăп: çак ыйтăва вырăнта тивĕçлипе татса панă çĕрте ял Совечĕ хăйĕн обязанноçĕсене пĕлет тесе шанчăклăнах калама пулать. Анчах та, фактсем кăтартса панă тăрăх, çав ыйтура хăшпĕр пăтраштарусем пур-ха. Çакна аса илтерни те çителĕклĕ: нумаях та пулмасть ĕлĕкрех ял Совечĕн ĕçне колхоз правленийĕн туса пымалла, ял Советне колхоз правленийĕпе улăштармалла, тесе каланисем те илтĕнетчĕç. Çакăн пек сĕнӳсене паракансем ял Совечĕпе колхоз правленийĕ хушшинче питех те пысăк уйрăмлăх пуррине пачах ăнланман».

Шупашкар районĕнчи Çĕньял ял Совечĕн председателĕ Антонов юлташ çапла çырать: «Пирĕн ял Совечĕн территорийĕнче 6 колхоз. Правлени председателĕсем ял Совечĕ хушнă ĕçсене пурнăçлассишĕн тăрăшмаççĕ. Колхоз ĕçĕсене япăх туса пыраççĕ. Ял Совечĕ вĕсен ĕçне лайăхлатас шутпа тĕрлĕрен мерăсем йышăнать. Промышленность валли ĕç вăйĕ парас енĕпе те колхоз председателĕсем эпир хушнине итлемеççĕ. «Эпир ял Советне пăхăнмастпăр», —теççĕ вĕсем. Çапла вара ял Совечĕ колхозсене ертсе пырас ĕçре аякки тăрса юлнă пек тухать». Çав районри Карачура ял Совечĕн председателĕ Власов юлташ çапла çырать: «Ял Совечĕ хăйĕн территорийĕнче государство хушнă ĕçсене тĕрĕс тата вăхăтра пурнăçа кĕртмеллине эпĕ ăнланатăп. Анчах ял Совечĕ хушнине колхоз правленийĕсем пурнăçа кĕртменни ĕçе питĕ чăрмантарать. Районри организацисем пирĕн ĕçпе интересленмеççĕ, пирĕн шухăша шута илмесĕрех, эпир тума йышăннă решенисене кам килчĕ, вăл улăштарса хурать. Нумаях пулмасть çакăн пек факт пулса иртрĕ. Районран панă задани тăрăх, пирĕн ял Советĕнчен торф кăларма çынсем тупса ямаллаччĕ. Ку ĕç кирлине ăнланса, ял Совечĕ ăна активлăн пурнăçа кĕртме тытăнчĕ. Ял Советне кĕрекен колхозсенчен ĕçе юрăхлă çынсене тупса, торф кăларма кайма палăртрăмăр. Пуринчен те паллă, ку ĕçре йывăрлăхсем сахал мар ĕнтĕ. Районри организацисенчен пулăшу кирлĕ. Анчах районри хăшпĕр организацисен руководителĕсем пулăшас вырăнне чăрмантарни те пулать. Çапла, «Коминтерн» колхозран торф кăларма яма ял Совечĕ палăртнă çынсене, ним сăлтавсăрах, райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ Васильев юлташ ямарĕ. Промартель председателĕ Антонов промышленноçра ĕçлеме мобилизациленĕ çынсене хăй патне ĕçлеме илнĕ. Ял Совечĕ çакăн çинчен районри организацисене пĕлтерчĕ. Анчах ку таранччен те çӳлте асăннă ĕçсене тӳрлетес тĕлĕшпе пире пулăшу памарĕç. Торф кăларма çителĕклĕ таран ĕç вăйĕ тупса яманнишĕн каллех ял Совечĕ айăплă пулса юлать. Паллах ĕнтĕ, çакăн пек ĕçлени государствăна сахал усă парать».

Ишлей районĕнчи ял Совет председателĕсем те районри канашлура хăйсен ĕçне лайăхлатас енĕпе нумай лайăх майсем палăртрĕç. Кипечкасси ял Совечĕн председателĕ Пайманов юлташ çапла пĕлтерчĕ: «Ял Совечĕн авторитетне кирлĕ вырăна лартас тесен, колхозсемпе шкулсене тата промартельсене ертсе пырас ĕçе государство хушнă пек туса пымалла. Эпир пур ĕçсене те совет влаçĕ ячĕпе тата закона пăхăнса туса пыратпăр. Ял Совечĕ хушнă ĕçсене колхозсем тата шкулсем тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем пĕлеççĕ: эпир хушнине пурнăçламанни—закона пăхăнманни пулать. Анчах çакна калама кирлĕ: районри учрежденисенче ĕçлекен хăшпĕр работниксем ял Совечĕн ĕçне хакламаççĕ. Ун пек работниксем ял Совечĕн территорине уполномоченнăй пулса килеççĕ пулсан, панă ĕçсене ял Совет руководителĕсемпе çыхăнмасăрах тума пикенеççĕ. Ку вара чăнах та ял Совечĕн авторитетне ӳстерни мар, ăна ним вырăнне хуманни пулать».

Ял Совечĕпе колхоз правлени хушшинчи уйрăмлăха ăнланас тесен, Сталинла Конституципе ялхуçалăх артелĕн Уставне тата партипе правительствăн кулленхи директивисене тĕплĕн пĕлсе тăни кирлĕ.

Ял Совечĕсем—государство влаçĕн органĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсене пĕтĕм халăх, пĕртан тата тӳрремĕн суйлас правăпа усă курса, вăрттăн сасăласа, суйласа хăварать. Чăваш АССР Конституцийĕн 51-мĕш статьи тăрăх, ял Совечĕсем хăйсен территорийĕнче культурăпа политика тата хуçалăх строительствине ертсе пыракан, вырăнти бюджета тăвакан, хăйсене пăхăнакан управлени органĕсене ертсе пыракан, государство йĕркелĕхне сыхласа тăракан, çĕршывăн оборона хăватне çирĕплетме пулăшакан, законсене пăхăнса пымалла тăвакан тата граждансен прависене сыхласа пыракан власть пулса тăраççĕ.

Ял Совечĕсен кулленхи ĕçĕсем вырăнти условисенчен тухса тăраççĕ. Сăмахран, культурăпа политика тата хуçалăх строительствине ертсе пырас ĕçре çакăн пек конкретлă задачăсем килсе тухаççĕ. Шкул çулне çитнĕ ачасене пурне те шкула явăçтарасси, чир-чĕрпе кĕрешес ĕçе организацилесси, шкулсемпе больницăсен тата клубсен çуртне кирлĕ пек юсаса тăрасси, вĕсене хĕллехи вăхăтра ăнăçлăн ĕçлеме çителĕклĕ таран вутă тупса парасси, вырăнти çулсене, кĕперсене лайăх тытса усрасси.—çак ĕçсене пурнăçа кĕртнĕ чухне ял Совечĕ, паллах ĕнтĕ, хăйне панă правăсемпе усă курма тивĕç. Пурнăçра çакăн пек фактсем тĕл пулаççĕ: хăшпĕр граждансем хăйсен ачисене шкула ямасăр чарса тăраççĕ, е тата колхоз правленийĕн председателĕ шкула каймалли ачасене вĕреннĕ вăхăтра колхоз ĕçĕнче тытса тăрать. Ашшĕ-амăшĕсем фронтра çапăçса вилнĕ тăлăх ачасем тумтир çук пирки шкула çӳреймеççĕ. Ял Совечĕн çав ыйтусене, совет государствин законĕсемпе усă курса, кĕске вăхăтрах татса памалла.

Ял Совечĕ влаçĕн вырăнти органĕ пулса тăрса, колхоз хуçалăхне вăйлатмалли майсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшать. Сăмахран, правлени колхоз çĕрне сыхлассишĕн начар тăрăшнине пула уйрăм колхозниксем нормăран ирттерсе çĕр касса илнĕ фактсем пур. Ял Совечĕ çакăн çинчен уйрăм колхозниксене тата колхоз правленийĕн председательне асăрхаттарать, вĕсене закона пăхăнма хушать.

Ял Совечĕ колхозсемпе колхозниксем тата уйрăм хуçалăхпа пурăнакан хресченсем государство умĕнчи парăмсене мĕн чухлĕ вăхăтра пурнăçланине, укçа-тенкĕ пухмалли плана мĕнле тултарса пынине куллен тĕрĕслесе тăрать. Ĕççыннисен жалобисене вăхăтра пăхса тухать те кирлĕ ответ парать. Ял Совечĕ тумалли пĕр ĕç те колхоз правленийĕпе çыхăнмасăр пулса иртмест. Çавăн пекех колхоз правленийĕ тумалли ĕçсем те ял Совечĕ хутшăнмасăр пулса пымаççĕ.

Колхоз вăл—авалтан пĕччен те сапаланчăк хуçалăхпа пурăннă уйрăм хресченсем Ленинпа Сталинăн кооперации планĕ тăрăх хăйсем ирĕккĕн пĕрлешсе тунă ялхуçалăх артелĕ пулса тăрать. Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе колхозсем ялхуçалăх ĕçĕсене машинăсемпе тăвакан социализмлă шултăра хуçалăхсем пулса тăчĕç. Отечественнăй аслă вăрçă кунĕсенче хăйсен иксĕлми вăйне пысăккăн кăтартса пачĕç. Ăнланмалла ĕнтĕ, колхоз правленийĕнче ĕçлеме политика тĕлĕшĕнчен çителĕклĕ пек малта пыракан çынсене суйламалла. Колхоз правленийĕ артель членĕсене производствăра йĕркелесе пырать, колхоза татах та ытларах аталантарассишĕн ялхуçалăх артелĕн уставне пăхăнса ĕçлет. Колхоз правленийĕ совет влаçĕн вырăнти органĕ мар, производствăна йĕркелесе пыракан орган пулса тăрать. Вăл хăйĕн ĕçĕнче государство влаçĕн органĕсем мĕн хушнине пурнăçа кĕртсе пырать.

Пур ĕçсене те ăнăçлăн тата вăхăтра туса пырас тесен, ял Совет руководителĕсен политика пĕлĕвĕпе ĕçри пултарулăхĕ çителĕклĕ таран çӳлти пусăмра тăмалла, вĕсен хăйсен пĕлĕвне куллен ӳстерсе пымалла. «Чăн-чăн авторитета, хăйсене халăх хисеплессине ял Совечĕсем питĕ лайăх ĕçленипе кăна, правительство решенийĕсене, совет государствин законĕсене тĕрĕс пурнăçа кĕртсе пынипе кăна, государство лартнă задачăсене пурнăçа кĕртме халăха пĕлсе организациленипе кăна, совет ĕçне халăхăн анлă массине явăçтарнипе кăна çĕнтерсе илме пултараççĕ» (М. Калинин).

Ял Совет председателĕсем райсовет исполкомĕ енчен вĕсене пулăшассине вăйлатма кирли çинчен тĕрĕс калаççĕ. Хăшпĕр райсовет исполкомĕсем чăнах та ку ĕçре йăнăш çул çинче тăраççĕ-ха. Ял Совечĕ йышăннă решенисене тĕрĕслемеççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртме кирлĕ майсем туса памаççĕ. Ял Совечĕн ĕçне хакламаççĕ. Ял Совечĕсен авторитетне пур майсемпе те ӳстерсе пымалла. Çак ĕçре райсовет исполкомĕсен тĕп вырăн йышăнмалла.

П. ИВАНОВ.
Чăваш АССР Совнаркомĕн Территориальнăй отделĕн заведующийĕ.

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского. 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин 2—95.

НТ 00548 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2. Тираж 16.000